*Алексей ЛЕОНТЬЕВ,*
*«Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ*

# ЧĂВАШ ПИЧЕЧĔ XXI ĔМĔРТЕ

«ХЫПАР» хаçат никĕслевçи Николай Никольский чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн ум статйине çакнашкал сăмахсемпе вĕçленĕ: «Пирĕн те, чăвашсен, хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ, хамăр начар пурнăçа аванлатасчĕ». Вăл, ахăртнех, хăй журналистикăра çĕнĕ çул-йĕр пуçласа янине тавçăрман та... Хаçат текен хатĕр, çĕнĕ хыпарсен ярăмĕсенчен пуçланса кайнăскер, малтанхи тапхăрта информаци çăл куçĕ кăна пулнă. Кайран класс кĕрешĕвĕн хатĕрĕ пулса тăнă – халăха пăлхава чĕннĕ, пусмăрçăсене питленĕ, урăхла каласан, политика кĕрешĕвĕнче пĕр-пĕр çул тытса пынă. Марксизм-ленинизм классикĕсен пĕр ĕçĕнче те эсир «хаçатăн ырришĕн ĕçлемелле тата халăхшăн тăрăшмалла» тесе каланине тупаймастăр.

Мана çапла туйăнать: «Хыпар» хаçат тавра пуçламăш тапхăртах чăн-чăн чăваш ĕçĕпе сыхăннă хăйне евĕрлĕ сывлăш йĕркеленнĕ. **«ЧĂВАШ ĔÇĔ» ТЕНИМЕ;** тен, чылай **ХАЛĂХЛĂРАХ** – вăл чăваш халăхĕн пурнăçĕн пур енĕсене те пырса тивет: йăла-йĕркене тата культурăна – унăн мĕн пур анлăшĕпе, сăнĕ-сăнарĕпе, чĕлхене, медицинăна тата гигиенăна, воспитани парассине тата вĕрентӳ ĕçне, килти хуçалăха тата çĕр ĕçне, ăс-хакăл пуянлăхне тата ыт. те.

Никольский редакциленĕ 22 номер пĕтĕмпех – кăмăл-сипетпе дидактика, культурăпа вĕрентӳ, ял хуçалăхĕпе ăслăлăх пĕлĕвĕсен çăл куçĕсем. Чăн та, революци тематикипе те чылай материал пичетленĕ, мĕншĕн тесен вăл вăхăт – вырăссен пĕрремĕш революцийĕн тапхăрĕ пулнă-çке. Анчах кулленхи пурнăç çинчен калакан материалсем ытларах пулнă. Николай Никольский хаçат кăларнипе кăна çырлахман. Вăл пуçарнипе çут ĕçне /каллех – питĕ анлă пĕлтерĕшлĕ/ халалланă вун-вун кĕнеке тухнă.

Паян эпĕ 1907 çулта чăвашсен пĕрремĕш хаçатне мĕнле хупни çинчен, вăл революци майлă пулни е пулманни çинчен, Никольский 1917 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче хăйĕн хаçатне тепĕр хут чĕртсе тăратни çинчен, сулахай эсерсем – пулас большевиксем, 1918 çулхи нарăс уйăхĕнче редакцие вăрăхурахла тапăнса хаçата «Канаш» ят пани çинчен, çав çуллах Хусанта совет влаçне хирĕç пынă – чăваш наци юхăмĕн хастар та чарусăр ертӳçисем Агафья Гаврилова, Гаврил Алюнов тата ыттисем «Хыпара» виççĕмĕш хут чĕртсе тăратни çинчен тата вĕсен синкерлĕ шăпи çинчен /Агафья Гаврилована персе пăрахнă, Гаврил Алюнов ЧКн Хусанти тĕрминче выçăпа вилнĕ/ тĕплĕн каласшăн мар. Ку вăл – чăваш журналистикин синкерпе, тип-шарпа, хуйхăпа тулнă историйĕ. Тепĕр тесен, XX ĕмĕр хăй те калама çук пысăк синкерсемпе палăрса юлчĕ.

Иртнĕ ĕмĕре усалпа кăна асăнни тата хаклани тĕрĕс мар тата айванла пулĕччĕ. Çакна «Хыпар» хаçатăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ те лайăх çирĕплетсе параççĕ. «Хыпарăн» хăйне евĕрлĕхĕ çакăнта: çак хаçат, коммунизм идеологĕсем 1906-1907, 1907-1918 çулсенчи «Хыпара» «Канаш» хаçатран уйăрма хăтланнă пулин те, хăйĕн тымарĕсене çухатман. Телее, Никольский никĕслесе хăварнă традицисем сыхланса юлнă. «Канаш» хаçата та, «Чăваш коммунине» те, «Коммунизм ялавне» те чăваш халăхĕ юратса вуланă. Вĕсенче, паллах, совет саманинчи ытти хаçатсем пекех идеологи сĕмĕ тапса тăнă пулин те Никольский никĕсленĕ «Хыпарта» çутатнă темăсем – ыррине вĕрентни, пурнăçа лайăхлатма пулăшни – сыхланса юлнă.

1991 çулхи çурла уйăхĕнче хаçатăн малтанхи ятне тавăрса эпир политика утăмĕ тунипе пĕрлех реабилитаци ĕçне турăмăр. Эпир малтанхи хыпарçăсен таса ятне, çав шутра Николай Васильевич Никольский ятне те тавăртăмăр.

Мускавра, Чăваш Республикин представительствин çуртĕнче, чăваш халăхĕн чаплă çыннисен галерейи пур. Вăл Атăлçи Пăлхар элтеперĕнчен Алмушран пуçланать. Унта Никольский сăнĕ те пур. Вăл, ученăй-энциклопедист, еткерлĕхе виç çĕр том ăслăлăх тĕпчевĕ хăварнăскер, тĕрĕссипе, чăвашсен пĕрремĕш хаçатне никĕсленипех тăван халăхăмăрăн чи чаплă çыннисен йышĕнче пулмалла.

2003 çулта Никольский çуралнăранпа 125 çул çитет. Çак юбилее уявлакан йĕркелӳ комитетне Чăваш Республикин пĕрремĕш Президенчĕ Николай Федоров ертсе пыни питĕ тĕрĕс пулмалла, мĕншĕн тесен 1917 çулта тепĕр хут чĕрĕлсе тăнă «Хыпар» хаçатра Президент ертсе пыракан Чăваш Республикине туса хумалли çинчен шăпах Николай Васильевич Никольский çырнă. Кунсăр пуçне эпир, Никольский çуралнăранпа 115 çул çитнине палăртнă кунран пуçласах, ученăй ĕçĕсене пичетлесе кăларасси пирки калаçатпăр, анчах лавĕ вырăнтан та тапранман-ха. Ку, паллах, питĕ пăшăрхантаракан япала.

Паян, тен, «Хыпар» никĕслевçин юбилейĕ пирки калаçма кирлех те марччĕ-тĕр, анчах сăлтавĕ пур. Çак сăлтав саккунлăран та саккунлă, мĕншĕн тесен Президент пĕлтĕр алă пуснă саккун Чăваш пичечĕн кунне «Хыпар» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнă кун ячĕпе уявлассине палăртать.

Малтанхи хыпарçăсем хывса хăварнă традицисем çинчен, хаçатăн гуманизм çул-йĕрĕ çинчен маларах каларăм ĕнтĕ. Эпир, хыпарçăсен паянхи ăрăвĕ, çакна хытă шанатпăр: «Хыпар» Издательство çурчĕн вăйĕпе çĕнĕрен те çĕнĕ хаçатсем кăларни – мода хыççăн хăвалани мар, конъюнктурăна пуç çапни мар, Иван Яковлев, Николай Никольский тата вĕсен юлташĕсем пуçарнă «Чăваш ĕçне» малалла тăсни тата аталантарса пыни.

Парти органĕсем хушнипе 1966 çулта чăваш çамрăкĕсен 6 пин тиражлă хаçатне хупнипе килĕшсе пурăнмаллаччĕ-и вара? Акă мĕншĕн «Хыпар» хаçат редакцийĕ 1996 çулхи кăрлач уйăхĕнче çамрăксен хаçатне тепĕр хут чĕртсе тăратрĕ. Халĕ вăл 19 пин экземплярпа тухать.

1906-1907 çулсенче Никольский пуçарнипе «Хыпар» хаçат хĕрарăмсен ыйтăвĕсемпе пĕчĕк кĕнекесем кăларнă. Пирĕн Издательство çурчĕ виççĕмĕш çул ĕнтĕ «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат кăларать, вăл 10 пин тиражпа пичетленет.

Никольскин «Хыпарĕ» сывлăх тата гигиена ыйтăвĕсемпе çав тери нумай çырнă. Эпир хальхи вăхăтра 19 пин тиражпа «Сывлăх» хаçат кăларатпăр. Эпир кăларакан «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçат республикăра рекордлă тиражпа – 34 пинпе тухать. Арçынсен «Ар» хаçачĕ пĕрремĕш çырăнтару тапхăрĕнчех 4 пине яхăн тиражпа тухма пуçларĕ. Пирĕн чи пĕчĕккисем валли «Ачапча» тухать, «Ыйту-хурав» – «Вопрос-ответ» хаçатсем пур. Кунпа пĕрлех юлашки çак хаçатсене çуратнă 95 çулхи «Хыпар» хаçат хăйĕн яланхи вулакансене çухатмасть, тиражне чакармасть.

Эпĕ калани çакна çирĕплетсе парать: паянхи кун «Хыпар» Издательство çурчĕ Раççейри вырăсла мар хаçатсенчен чи малти ретре пырать. Эпир Раççейре пуçласа Издательство çурчĕ туса хутăмăр, йăнăшмастăп пулсан, наци республикисенче «Хыпар» йышши вырăсла мар хаçатсем халĕ те мăнаçлă пĕччен-лĕхре. Юрĕ, çын картине кĕрер мар, вĕсене ырăпа пархатар çеç сунар.

Эпир çĕнĕ хаçатсене мĕншĕн уçатпăр-ха? Паллах, хăлаçланса мухтанма мар ĕнтĕ. Пирĕн хаçатсем пурте тенĕ пекех услам кӳреççĕ. Кунсăр пуçне вĕсем çырăнтару тапхăрĕ вăхăтĕнче пĕр-пĕрне рекламăлаççĕ. 2000 çула ăнăçлă вĕçлерĕмĕр: хаçат кăларма каякан тăкаксен 90 процентне «Хыпар» Издательство çуртĕнче тăрăшакансен вăйĕпе ĕçлесе илнĕ.

Анчах хаклама çук пуянлăхсем те пур. «Хыпаршăн» чи кирли – культурăна, чĕлхене, тăван халăх йăли-йĕркине, традицийĕсене сыхласа хăварасси тата аталантарасси. Массăллă информаци хатĕрĕсен конкуренцийĕнче çак тупăшу электронлă массăллă информаци хатĕрĕсем, çав шутран Интернет та, аталанса пынă май вăйлансах пырĕ. Çавăнпа та малалла каяс тесен малашлăха курмалла. Шел те, эпир пĕтĕмĕшле илсен Чăваш Республикинчи вулакансемшĕн кăна ĕçлетпĕр-ха. Чăваш халăхĕ çурри ытла вара ытти регионсенче пурăнать. Пирĕн диаспорăшăн ĕçлемелле. Çакă пурнăçа кĕретех! Анчах кунта федераци пулăшăвĕсĕр май килмест. **Вырăс мар халăхсен, çав шутра чăвашсен те, икĕ хут патриот пулмалла-çке. Раççейĕн, федерацин патриочĕ тата тăван халăхăн – этносăн патриочĕ.** Мускав, тĕрĕссипе каласан, вырăс мар халăхсен массăллă информаци хатĕрĕсене нихçан та тивĕçлипе пăхман. Пур йывăрлăх та республика бюджечĕ çине тиенет. Ку, паллах, тĕрĕс мар. Пичет министерствин, эпир шутланă тăрăх, укçа-тенкĕ уйăрмашкăн наци кăларăмĕсен реестрне çирĕплетмелле.

Пĕтĕм Раççейри чăваш хаçатне никĕслеме тахçанах вăхăт çитнĕ. Вăл Мускавра тухмасан та пултарать. Анчах ун валли Мускавăн укçа-тенкĕ уйăрмаллах.

«Хыпар» Издательство çурчĕ Раççей Федерацийĕнчи вырăсла мар пичет кăларăмĕсен конгресне туса хума сĕнет.

Николай Никольский ячĕллĕ фонд туса хумалла тесе шутлатпăр, унăн тĕп тĕллевĕ – чăваш хаçачĕсене пулăшасси пултăр.